Яваплă çынсем хăйсен тивĕçне пурнăçламаншăн ветерансен нушаланма тивет
**СĂМАХПА КĂНА ПУЛĂШАÇÇĔ** 2

Попечителĕн ачан вĕренĕвĕпе, канăвĕпе, обществăра хăйне мĕнле тытнипе кăсăкланмалла
**ТĂЛĂХСЕНЕ АСЛĂ ЮЛТАШ КИРЛЕХ** 3

Çак кайăкăн сасси савăнăçлă та, хурлăхлă та: халăх чунне ăнланать тейĕн
**КУККУК КАНМАСĂР АВĂТАТЧĔ...** 4

ПАЯН ВУЛĂР ТЕПĔР НОМЕРТЕ

Çамрăк экологсем тавралăха, республика, Раççей историне тĕпчеççĕ
**АЧАСЕНЕ ÇĔНТЕРМЕ ПУЛĂШАР** 2

Ĕлĕкрен упраннă япаласене алла тытсан чун савăнать, сăн-пит асамлă шевлепе çуталать
**«АСАННЕ АРЧИ» – ПУЛАСЛĂХ САПКИ** 3

Вăрçа кайнă чух Хĕветĕр Çитта: «Эсĕ пысăк пул!» – тесе хăварчĕ
**ПУЛЯ АЙĔНЧИ ИНТЕРВЬЮ** 4



чăваш халăх хаçачĕ

# ХЫПАР

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă 1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă 1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă



"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

98 /26504/ № Кĕçнерни кун, 2014, çу (май), 29 Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru

*Правительствăра*

## Приватизаци бюджета тĕревлетĕр

***Министрсен Кабинечĕн ĕнерхи ларăвне ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев пухăннисене Пограничник кунĕ ячĕпе саламланинчен пуçларĕ. Анчах ларури калаçу, паллах, уяв тавра мар, кулленхи çивĕч ыйтусем пирки пулчĕ.***

Малтанах республикăн хăшпĕр саккунне улшăнусем кĕртмелли саккун проектне ырларĕç. Ку ыйтупа сăмах илнĕ май вĕренӳ министрĕ Владимир Иванов тăлăхсене пырса тивекен çĕнĕлĕх çинчен пĕлтерчĕ. Республикăра паян 5 пин ытла тăлăх. Вĕсен 80% – çемьесенче. Ача çурчĕсенчи йыш чакни савăнтарать. Шăпăрлансене çемьесене пурăнма йышăнаççĕ, усрава илеççĕ. Малашне вара тепĕр мел те пулать – патронат çемйи. Ачана çемьене çулталăклăха параççĕ. Ку, министр палăртнă тăрăх, усрава иличченхи е çемьене йышăнас умĕнхи тапхăр пулĕ – çынсем ăна çулталăклăха йышăнса хăйсене тĕрĕслесе пăхĕç. Çакнашкал мелпе усă курас текенсем пуласса шанаççĕ.

Саккуна кĕртме сĕнекен тепĕр çĕнĕлĕх – патшалăх должноçĕнчи çынсене шанчăкран тухнине кура ĕçрен хăтарасси. Вице-премьер – ЧР Пуçлăхĕн администрацийĕн ертӳçи Александр Иванов «шанăçа çухатни» мĕнпе çыхăнма пултарассине те пĕлтерчĕ. Калăпăр, должноçри çын е унăн çемйин членĕсем тупăш çинчен калакан кăтартусем паманни. М.Игнатьев саккуна кĕртме сĕнекен çак улшăну коррупципе кĕрешнипе, йĕркене çирĕплетме ăнтăлнипе сăлтавланнине палăртрĕ.

2015-2019 çулсенче республика электроэнергетикине аталантармалли схемăпа программа пирки самай тĕплĕ калаçу пулчĕ. Строительство министрĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Александр Герасимов çак документсене хатĕрлес енĕпе пысăк ĕç пурнăçлани çинчен каласа пачĕ. Чăваш Енри потребительсене электричествăпа пысăк виçĕ сеть компанийĕ тивĕçтерет. Сывлăшри электролинисен сечĕн тăршшĕ – 2 пин км ытла. Генерацие илес тĕк – хăватсем 2225 МВт танлашаççĕ /ГЭС, ТЭЦ-2, ТЭЦ-3/. Республикăра усă куракан электричествăн пысăк пайĕ, 70%, Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкар хулисен тата Шупашкар районĕн тӳпи. Аталану программинче ТЭЦсен, подстанцисен реконструкцине çирĕплетнĕ, ытти ĕç калăпăшĕ те пысăк.

Çапах çак йĕркесен авторĕшĕн тĕлĕнмелли те тупăнчĕ – чиновниксен «хут пĕлменлĕхĕ» тĕлĕнтерчĕ. М.Игнатьев хайхи программăра Шупашкарти 1-мĕш ТЭЦа та мĕншĕн асăннипе кăсăкланчĕ: «Вăл ĕçлемест, хуçисем экономика енчен усси çуккине кура ăна сутлăха кăларасшăнни çинчен калатчĕç-çке…» Уçăмлă хурав пулманран Михаил Васильевич пусăм тусах ыйтрĕ: «ТЭЦ-1 ыран ĕçлесе каять-им? Сутмаççĕ-им?» «Ĕçлесе каймасть, сутасси пирки информаци çук», – пулчĕ хурав. Çав вăхăтрах 5-мĕш ТГКн кунти филиалĕн ертӳçисем нумаях пулмасть çеç 1-мĕш ТЭЦа сутлăха кăларассине çирĕплетнĕччĕ, çакăн пирки республика хаçачĕсем те çырнăччĕ. Чиновниксем хаçат вуламаççĕ-ши вара?

Чăваш Ен харпăрлăхĕнчи темиçе предприятие сутасси пирки вара информаци пур. Ăна ларура пурлăх министрĕ Анатолий Кузьмин пĕлтерчĕ. Патăрьелĕнчи «Плодопитомник» тата «Газпроммежрегионгаз» АУОсене приватизаци планне кĕртнĕ. Çав планпа пăхнă пурлăха сутни бюджета 101 млн тенкĕ кӳмелле. Малтан список анлăрах пулнăмĕн, анчах ăна кĕскетме тивнĕ. Çав шутра республика Пуçлăхĕн администрацийĕн апатлану комбинатне, «Фармация» предприятие, «Чăвашагролизинга» приватизацилемеллисен ретĕнчен кăларнă.

● ➡ 3 стр.

*Ас тăвăм*

## Канашра – вертолет-палăк





cap.ru сайчĕн сăн ӳкерчĕкĕ

***Ĕнерхи кун Канаш çыннисен асĕнче нумайлăха юлĕ. Хулан тĕп тӳремĕнче хăюлăхпа паттăрлăх монументне – вертолет-палăка – уçрĕç. Кунта çамрăк çарçăсем, кадетçăсем, пограничниксен çамрăк тусĕсем, çĕр-шыв чиккине сыхланă ветерансем, Афганистанри, Çурçĕр Кавказри çапăçусене хутшăннисем ирех пухăннă.***

Уява Раççей Геройĕсем Николай Гаврилов, Вячеслав Бочаров, Евгений Борисов, Раççей халăх артисчĕ, телеертӳçĕ Леонид Якубович, сумлă ытти хăна хутшăнчĕ.

Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев пухăннисене Пограничник кунĕ ячĕпе саламларĕ, ырлăх-сывлăх сунчĕ. Ас тăвăм палăкне уçни çамрăк ăрăвăн шухăшкăмăлне çирĕплетме пулăшас, ывăлĕсене çухатнă ашшĕ-амăшне палăк умĕнче пуç тайса ĕмĕрлĕхех ячĕсене асра тытма витĕм кӳрес ĕçре пысăк вырăн йышăннине палăртрĕ.

Вертолета тӳреме Канашсен ентешĕ – Янкăлчра çитĕннĕ РФ çарĕн тава тивĕçлĕ летчикĕ Николай Гаврилов генерал-лейтенант – сĕннипе ниме меслечĕпе вырнаçтарнă. «Николай Федорович пирĕн республикăшăн ырă ĕç нумай тăвать», – терĕ Михаил Васильевич.

– Хăюлăхпа паттăрлăха сăнарлакан палăк пирĕн хулана кирлех. Паян эпир çакăнта ăна уçма çеç мар, çĕр-шыв ирĕклĕхĕшĕн тата никама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешсе вилнисене пуç тайма та пухăннă, – палăртрĕ Канаш хула администраци пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Людмила Иванова.

Палăк мĕнлерех пуласси тата ăна ăçта вырнаçтарасси пирки хула çыннисем маларах сӳтсе явнă, 30 ытла вĕренекен чи лайăх ят парассишĕн тупăшнă. Конкурсра 8-мĕш шкулти 9«а» класра вĕренекен Карина Спиридонова çĕнтернĕ, вăл сĕннĕ «Хăюлăхпа паттăрлăх монуменчĕ» ят пурне те килĕшнĕ. Михаил Павловпа /5-мĕш шкул, 5«б» класс/ Елена Сауляк /патшалăх службипе управлени лицейĕ, 9 класс/ 2-3-мĕш вырăнсене йышăннă. Çĕнтерӳçĕсене хаклă парнесемпе чысланă, пултарулăх ăмăртăвне хутшăннисем пурте Федераци хăрушсăрлăх служби авиаци базине кайса курма тивĕçнĕ.

– Пограничник кунĕнче палăк уçса ентешсене пысăк савăнăç кӳтĕмĕр. Раççей чикки 60 пин ытла çухрăм, çакă Çĕр чăмăрĕн экваторĕнчен 1,5 хут вăрăмрах. Чикĕре тăракансем Тăван çĕр-шывăмăра кирек хăш самантра та шанчăклăн сыхлаççĕ, – терĕ Раççей Геройĕ Николай Гаврилов.

«Альфа» ушкăн тытăмĕнче Бесланра ачасене ирĕке кăларма хутшăннă Раççей Геройĕ Вячеслав Бочаров саппасри полковник-десантник постамент çине вырнаçтарнă çар вертолечĕпе Афганистан, Çурçĕр Кавказ çыннисен интересĕсене епле хӳтĕленине аса илчĕ.

– Монумент умĕнче малашне вăтам шкулпа, лицей-гимназипе сыв пуллашакансем, мăшăрланакансем, ыттисем те асăнмалăх сăн ӳкерĕнĕç, унпа мăнаçланĕç, – терĕ Вячеслав Алексеевич.

Савăнăçлă лару-тăрура Канаш хулипе районĕнчен «хĕрӳ» вырăнсенчи çапăçусенче паттăрлăх кăтартнисен ушкăнне «Афганистанран çарсене кăларнăранпа 25 çул» медальпе наградăларĕç.

Канашпа Тăвай районĕсенчи тата Канаш хулинчи 38 каччă Афганистанра тата Чечняра пуç хунă. Паттăрсене пуç тайса ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев, РФ Геройĕсем Николай Гаврилов, Вячеслав Бочаров, Евгений Борисов палăк умне чĕрĕ чечексем хучĕç.

■ **Валентин ГРИГОРЬЕВ**



## КУН хыççăн КУН

☎ 56-04-26

### Пуçаруллисен конкурсĕ

***Çамрăксен пуçарулăх центрĕнче çамрăксемпе студентсен общество организацийĕсен ертӳçисемпе хастарĕсен «Манăн пуçарулăх» республика конкурсне пĕтĕмлетнĕ.***

«Чи лайăх ертӳçĕ» тата «Чи пултаруллă лидер» ятсене çĕнсе илессишĕн вĕренӳ учрежденийĕсенчи 11 çамрăк тупăшнă. Пĕрремĕш тапхăрта жюри членĕсем конкурса хутшăнакансен тĕрлĕ ĕçне – «Манăн опыт, манăн çитĕнӳ» резюме, «Эпĕ тата общество пĕрлешĕвĕ» видеокăтартмăш, «Манăн ăнăçу – общество пĕрлешĕвĕн ăнăçăвĕ – пирĕн çĕр-шыв ăнăçăвĕ» эссе тата портфолио – пахаланă. Финалта вĕсем пĕрлешĕве аталантармалли проекта хӳтĕленĕ. Конкурс пĕтĕмлетĕвĕпе студентсен общество организацийĕсен ертӳçисен хушшинче çĕнтерӳçĕ ятне Шупашкар машиностроени техникумĕн студенчĕ Дмитрий Мардежев тивĕçнĕ. Пĕрлешĕвĕн чи маттур лидерĕ – И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университетĕнчи Андрей Михайлов. Конкурсра мала тухнисем Чăваш Ен чысне Пĕтĕм Раççейри «21-мĕш ĕмĕрти лидер» конкурсра хӳтĕлĕç.

**Е.АНДРЕЕВ.**

### Регбол команди – пĕрремĕш

***Çак кунсенче Чăваш Ене савăнăçлă тепĕр хыпар çитрĕ: регболистсен команди çĕр-шыв кубокĕнче çĕнтернĕ. Турнир Киров облаçĕнчи Вятка патшалăх гуманитари университечĕн спорт комплексĕнче иртнĕ.***

Ăмăртура Новосибирск, Екатеринбург, Киров, Шупашкар командисем вăй виçнĕ. «Пирĕн спортсменсем кашни тĕл пулура хастар пулчĕç, пĕринче те выляса ямарĕç. Финалта пирĕн каччăсем пĕлтĕрхи çĕнтерӳçĕпе – Екатеринбургри «Уральский легион» командăпа – тупăшрĕç. Телее, Чăваш Ен команди вĕсене парăнтарма пултарчĕ: вăйă 15:4 шутпа вĕçленчĕ», – пĕлтернĕ ЧР регбол федерацийĕн ертӳçи Иван Андреев. Ку – республика регболисчĕсен пирвайхи чи пысăк çитĕнĕвĕ. Пирĕн ентешсем çĕр-шыв ăмăртăвĕсенче темиçе хут та хутшăннă, анчах çакнашкал кăтартупа палăрайман.

**А.МИХАЙЛОВ.**

### Пограничниксене халалланă

***Ĕнер пограничниксем хăйсен уявне анлăн паллă тунă. Шăмăршăсем çав кун чикĕ сыхлавçисене халалласа лартнă палăка уçнă. Ăна салари кану паркĕнче вырнаçтарнă.***

Палăка спонсорсен тата пограничниксен çарĕнче пулнисен укçи-тенкипе çĕкленĕ. Ырă çак ĕçĕн пуçаруçи тата йĕркелӳçи – Шăмăршă районĕнчи «Пограничное братство» общество организацийĕн председателĕ Е.Сетриванов. Палăка савăнăçлă лару-тăрура уçма Мускавпа Шупашкар хулисенчен килнĕ пысăк хăнасем те хутшăннă. Кану паркĕнчи çак вырăна шкул ачисемпе çамрăксем питĕ килĕштереççĕ.

**А.ГРОМОВА.**

### Вулавăш ĕçченĕсене чысланă

***Элĕкри тĕп библиотекăра «Вулавăшăн праçник!» уяв каçĕ иртнĕ. Ăна Пĕтĕм Раççейри библиотекăсен кунне халалланă.***

Мероприятие Элĕк район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ Эдуард Николаев, социаллă аталану, культура тата архив ĕçĕн пуçлăхĕ Людмила Семенова, Е.А.Соколова тата М.М.Прокопьева ветерансем хутшăннă.

Эдуард Николаев салам сăмахĕнче библиотекарь ĕçĕ чи интереслĕ профессисенчен пĕри пулнине палăртнă. Халăхăн канăвне йĕркелес, вĕсен тавра курăмне, культура шайне ӳстерес тесе вулавăш ĕçченĕсем ырми-канми тăрăшаççĕ. Ку уява вĕсем кăна мар, кĕнекене юратакансем те хаваспах палăртаççĕ. Уявра маттур библиотекарьсене Элĕк район администрацийĕн Хисеп хучĕсемпе чысланă. Праçник професси ăсталăхĕпе паллаштаракан тĕрлĕ конкурспа тата вăйăпа вĕçленнĕ.

**Р.ИВАНОВА.**

### Велосипед – «тус» та, пулăшуçă та...

***Сывă пурнăç йĕркине сарас, вăхăта усăллă та кăсăклă ирттерес тĕллевпе Муркаш районĕнчи Турай ял тăрăхĕнче хĕрарăмсен хушшинче велосипедпа чупас енĕпе ăмăрту ирттернĕ.***

«Велосипедпа çӳрени чĕрепе юн тымарĕсемшĕн усăллине палăртаççĕ специалистсем. Кунсăр пуçне велосипед вăхăта та перекетлеме пулăшать. Эпир ку шухăшпа килĕшетпĕр», – теççĕ ăмăрту йĕркелӳçисем. Хăйне евĕр тупăшăва асăннă ял тăрăхĕнчи чылай хĕрарăм хутшăннă. Татьяна Яникова пурне те хыçа хăварса финиша пĕрремĕш çитнĕ. Надежда Столяровăпа Раиса Васильева иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене пайланă. Вĕсене асăнмалăх парнесемпе хавхалантарнă. Хĕрарăмсем ку тăрăхра ăмăртусене кăна мар, ытти мероприятие те хастар хутшăнаççĕ, алă ĕçĕ тăвассипе палăраççĕ.

**Р.ВОЛЬНАЯ.**

### Çанталăк çинчен

Паян уяр çанталăк пулать. Çил хĕвел тухăçĕнчен çеккунтра 5 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 18, çĕрле 9 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 756 мм, сывлăшри нӳрĕк 34 процент.

**Кун тăршшĕ 17 сехет те 6 минут.**

Ыран хĕвеллĕ çанталăк пулать. Çил кăнтăр-хĕвел тухăçĕнчен çеккунтра 5 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 20, çĕрле 13 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 758 мм, сывлăшри нӳрĕк 28 процент.

**Кун тăршшĕ 17 сехет те 9 минут.**



ПУБЛИЦИСТ ШУХĂШĔ

## ДЕПУТАТ ХАЛĂХ ТАРÇИ ПУЛМА АН ПĂРАХТĂР

**Республикăн Патшалăх Канашĕ 20 çул тултарать те – мĕншĕн парламент тытăмне-ĕçне тишкермелли сăлтав мар? Темшĕн-çке юлашки çулсенче республика шайĕнчи хаçатсенче парламентарисен ĕçне çутатасси, мĕнле калас, ансăрланчĕ – тĕпрен илсен сессисем çинчен каласа панипех çырлахатпăр. Çакă хăй вăхăтĕнче Чăваш Енĕн пĕрремĕш Президенчĕ ПКпа пит туслах пулманнипе те сăлтавланчĕ пуль, çавăн МИХсемпе çыхăннă витĕмĕ вара паян та сирĕлсе пĕтеймест-тĕр. Апла тăк журналистсемшĕн пушшех – сухаламалли çерем.**

**Энциклопедисенче «парламент» пирки халăх суйлакан представительсен органĕ теççĕ. Урăхла каласан – халăх представителĕсем. Суйласса суйлатпăр-ха, анчах Чăваш Ен Патшалăх Канашĕнче халăх представителĕсемех-и – кун пирки тавлашма пулать. Чăваш Ен парламентаризмĕн ветеранĕ, ПКн Социаллă политика тата наци ыйтăвĕсем енĕпе ĕçлекен комитечĕн председателĕ республикăн 1990-1994 çулсенчи суйлаври парламенчĕн йышĕ пирки каласа тĕлĕнтерчĕ. Камсем депутат пулнăха? 20 врач, культурăпа вĕрентĕвĕн 20 представителĕ, право хуралĕн органĕсен 10 ĕçченĕ, пĕр пачăшкă…**

**Паян вара – пачах урăх ӳкерчĕк. Патшалăх Канашĕнчи 44 депутат биографине ятарласа тишкертĕм. Тĕпрен илсен – пуçлăхсем кăна. Теçеткене яхăн çеç – маларах е халь бизнеспа çыхăнман çынсем! П.Краснов хăй – юлашкинчен статистика органĕн ертӳçин çумĕн должноçĕнче пулнăскер, Д.Евсеев коммунист, И.Калентьевăпа Е.Николаева спортсменсем, В.Мидуковпа М.Михайловский пенсионерсем тата темиçе хушамат. Пĕлтĕр депутатсенчен чи пĕчĕк тупăш илнĕ Т.Строева пенсионерка та пулин депутат мандатне тытиччен предприниматель пулнă.**

**Тупăш тенĕрен, нумаях пулмасть республикăн влаç органĕсен официаллă сайтне депутатсен иртнĕ çулхи тупăшĕ, пурлăхĕ çинчен калакан кăтартусене вырнаçтарнă та – вĕсемпе кăсăкланса паллашрăм. Депутатсемшĕн савăнтăм. Тен, пытарам мар, ăмсантăм та пуль.**

**Ăмсанмалăх пур-ха та. Пурте тенĕ пекех миллионерсем вĕт. Пĕлтĕр миллион тенкĕрен сахалрах ĕçлесе илнисем унта сайра. Парламентра «хура халăх интересĕсене» хӳтĕлесе час-часах шăв-шав çĕклекен И.Моляков эсерĕн, Д.Евсеев коммунистăн, А.Кулагин либерал-демократăн тупăшĕсем те ӳпкелешмеллискерсем мар – 1,3 млн тенкĕ шайĕнче. Уйăхсерен 100 пин тенкĕ ытла – япăх теейĕмĕн. Чăн та, чи пуян парламентарисен шайне çĕкленмешкĕн вĕсен кармашмалла та кармашмалла-ха: Н.Угаслов строителĕн – 30,4 млн тенке яхăн, В.Иванов кондитерăн – 16,4 млн яхăн, «Элара» ертӳçин А.Угловăн – 14,2 млн. Списока малалла тăсма та пулать: Ю.Шлепнев, Е.Бадаева, В.Николаев, М.Резников, ыттисем…**

**Çакă-и халăх представителĕсен парламенчĕ? Паллах, пуçлăх-ертӳçĕ те – халăх йышĕнчех, анчах вĕсем – халăхăн пĕр пайĕ, пĕчĕк пайĕ, кăна. Çавăнпах хăшĕсем Патшалăх Канашĕ пирки «олигархсен парламенчĕ» теме пăхать-тĕр. Сăлтавсăр мар.**

**Ку япăх-и, лайăх-и – урăх калаçу. Çак йĕркесен авторĕн ку ыйтупа хăшĕ-пĕринпе калаçма май пулчĕ те – лайăххипе пĕрлех япăххи те пуррине депутатсем хăйсем те йышăнаççĕ. К.Мифтахутдинов, «Чăвашрегионгаз» гендиректорĕ, сăмахран, депутат-пуçлăхсем халăхпа курнăçни, çынсен нушисене пĕлни пирки калать, «çавăнпа та парламентра директорсем нумаййинче нимĕнле хăрушлăх та курмастăп» тет. Тепĕр енчен, унăн шухăшĕпе, саккун кăларакан органа ятарласа культура-вĕренӳ сферисен представителĕсене пухма тăрăшни вырăнсăр пуль, чи кирли – йышра саккун кăларас ĕçе пĕлекен çынсем пулни.**

**О.Таланов депутат та /вăл та пуçлăх – «Тароупаковка» АУО гендиректорĕ/ çапларах шухăшлать: «ПКра бизнес представителĕсем ытларах пулни пысăк çитменлĕх теейместĕп. Экономика лару-тăрăвĕ паян çăмăл мар – çак тапхăрта ку пушшех вырăнлă. Предприятисен пуçлăхĕсем çынсен, хăйсен коллективĕсен шăпишĕн пысăк яваплăх туяççĕ, çак туйăм парламента куçать – вĕсем çынсен пурнăçĕ, Чăваш Ен аталанăвĕ хăйсен йышăнăвĕсенчен килнине лайăх ăнланаççĕ». Çапах Олег Борисович тепĕр саманта та палăртать: «Депутатсен йышĕнче искусство, медицина, вĕренӳ представителĕсем ытларах пулнă тăк – парламентри ĕç интереслĕрех шая çĕкленетчĕ-тĕр, тĕрлĕ фракци хушшинче хирĕçӳ çуратакан ыйтусене татса парассин çивĕчлĕхĕ те çăмăлрах сирĕлетчĕ пуль».**

**Ун чухне, тен, парламентарисен халăха, республикăна кирлĕ саккунсен проекчĕсене сĕнме-хатĕрлеме те вăхăт ытларах пулатчĕ-тĕр. П.Краснов, авă, çирĕплетсех калать: самана улшăннă тапхăрта, 1990-1994 çулсенче ĕçленĕ парламентра, çав проектсене 100 процентчĕпех депутатсем хăйсем хатĕрленĕ. 20 çул каялла çуралнă Патшалăх Канашĕн спикерĕ пулнă В.Шурчанов та ас тăвать: ПК йышăннă саккунсен проекчĕсен 72% депутатсем хатĕрленĕ, 28% кăна – республика Президенчĕ сĕннисем. Паянхи шайлашу вара пачах тепĕр майлă: проектсен 1/3 пайĕ кăна – депутатсен тӳпи, ытти 2/3 пайĕ – ЧР Правительстви çуратнăскерсем, ĕç тăвакан влаç сĕннипе йышăннăскерсем.**

**Килĕшсемĕр, шухăшласа пăхмалăх пур вĕт. Малашне те çаплах пулсан йĕплĕ чĕлхесем влаçăн саккун кăларакан юппи, малта пулмаллискер, ĕç тăваканни хыççăн пырать тесе ӳпкелесси те часах мар-и?**

■ **Николай КОНОВАЛОВ**

*Аталану çулĕпе*

# Тĕллев – халăх ыйтăвĕсене туллин тивĕçтересси

***Вăрмар районĕнчи потребительсен обществин хуçалăхĕ пысăк. Вăл суту-илӳ, общество апатланăвĕн, производство, хатĕрлев, пулăшу ĕçĕсен отраслĕсене пĕрлештерет. Паян унăн тытăмĕнче лавккасемпе кафесем, çăкăр завочĕпе ытти тĕрлĕ продукци хатĕрлекен цехсем кăна мар, медицинăпа ветеринари аптекисем те ăнăçлă аталанса пыраççĕ. Райпо ĕç-хĕлĕпе тĕплĕнрех паллаштарма унăн канашĕн председателĕнчен, Вăрмар хула тăрăхĕн пуçлăхĕнчен С.Н.Харитоновран ыйтрăмăр.***

Реклама



*● Райпо канашĕн ертӳçи Сергей Харитонов.*

**– Сергей Николаевич, сăмаха суту-илӳрен пуçлар-ха. Паян ку касалăкра конкуренци уйрăмах пысăк.**

– Пирĕн тĕп тĕллев – халăх ыйтăвĕсене туллин тивĕçтересси. Республикăри предприятисем кăларакан экологи тĕлĕшĕнчен таса, паха продукци сутма тăрăшатпăр. Конкуренци, чăн та, çивĕчленсех пырать. Çĕр-шывĕпех сарăлнă сеть лавккисем районсене те çитрĕç. Ун пекки Вăрмарта та уçăлчĕ. Паллах, унăн витĕмĕ райпон тавар çаврăнăшĕнче те сисĕнме пуçларĕ. Çапах хамăрăн тавар туянакансене çухатса пыратпăр тесе калас килмест. Вĕсем кам шанчăклăраххине аван ăнланаççĕ. Сутуçăсем халăхпа пĕр чĕлхе тупма пултарнинчен, хăйсен ĕçне яваплă пурнăçланинчен нумай килет. Кавал, Чулкаç ялĕсенчи, Мăнçырмари «Новинка», поселокри «Заря» лавккасем, ветаптека лайăх ĕçлеççĕ.

Халăх Вăрмарти «Органика» лавккана питĕ килĕштерет. Унăн ассортиментĕнче йăлтах Чăваш Енри предприятисен продукцийĕнчен тăрать. Етĕрнери, Вăрнарти аш-какай комбиначĕсемпе, Етĕрнери сĕт завочĕпе, «Акконд-агро» предприятипе, Вăрнарти типĕ сĕт завочĕпе, Шупашкарти сĕтçу базипе, трикотаж фабрикипе, ыттисемпе çирĕп çыхăну тытатпăр. Сăмах май, Чулкаç лавкки юлашки çулсенче Етĕрне аш-какай комбиначĕн продукцине сутас енĕпе Чăвашпотребсоюз тытăмĕнче малти вырăнсене йышăнать.

Вăрмартан инçерех вырнаçнă ялсене тата пирĕнсĕр кам пулăштăр? Халăх сахал пурăнакан тăрăха сеть лавккисем те, предпринимательсем те тухса çӳрес çук, мĕншĕн тесен тăкакĕ нумай, тавар çаврăнăшĕ пĕчĕк. Райпо вара çынсен пурнăçне çăмăллатассине хăйĕн тивĕçĕ вырăнне йышăнать. Пĕчĕк ялти Уйкасри темиçе çул хупă тăнă лавккара юсав пуçларăмăр, часах уçма хатĕрленетпĕр. Ытлари кун, юн кун, кĕçнерни кун автолавкăсем çичĕ яла тавар тиесе каяççĕ. Кавал лавкки акă çынсем сахал пурăнакан Çиçтĕпе, Паваркасси, Чăрăшçырма ялĕсене тухса суту-илӳ йĕркелет, саккассем йышăнать. Кĕçĕн Шăхальте 50 кил, çурри хупă тăрать. Çак ял çыннисене кирлĕ таварпа тивĕçтерессишĕн Мăнçырма лавкки яваплă.

**– Райпо предприятийĕсен çимĕçĕ паха пулнине те час-часах илтме пулать.**

– Общество апатланăвĕн ĕçне ырламаллах. Вăл Чăвашпотребсоюз ирттерекен экономика ăмăртăвĕнче яланах малтисен йышĕнче палăрса пырать. Кăçалхи тăватă уйăхра плана 103 процент тултарчĕ. Обществăн халăх кăмăлне каякан лайăх точка нумай. Поселокри пĕлтĕр хута янă «Светлица» кафене çӳрекен йышлă. Унта паллă кунсене уявлама ялсенчен те килеççĕ. Юнашарах «Сказка» кафе вырнаçнă пулин те тавар çаврăнăшĕ чакмарĕ. «Светлицăн» иккĕмĕш хутĕнчи кукăль цехĕ те уйăхра 800-900 пин тенкĕлĕх продукци хатĕрлесе сутать.

Производствăна илес пулсан пылак шыв цехĕн продукцине ыйтакан чылай. Тутар Республикинчен те илме килеççĕ. 7 тĕрлĕ пылак шыв, 1 тĕрлĕ минерал шывĕ кăларатпăр. «Грушевый аромат» шыва уйрăмах кăмăллаççĕ. Ăна потребкооперации тытăмĕнче пĕрре кăна мар малти вырăнпа палăртрĕç. Çăкăр заводĕнче, пулă цехĕнче юсав ĕçне тытăнтăмăр. Заводăн çивиттине улăштаратпăр, перекетлĕ ĕçлекен çĕнĕ котельнăй хута яратпăр. Продукци пахалăхне лайăхлатас тĕллевпе чуста çăракан çĕнĕ йышши агрегат вырнаçтаратпăр. «Юность» кафе валли те çĕнĕ котельнăй проекчĕ хатĕрпе пĕрех. Ăна ăшă памалли сезон тĕлне ĕçе кĕртетпĕрех.

Стройка-юсав пирки сăмахланă май Кавал лавкки çумĕнчи пушă пӳлĕмсене ветеринарипе медицина аптекисем валли юсатпăр. Вĕсене халăх ыйтнипе уçатпăр. Кăçал тăватă лавккана автоматизацилеме хатĕрленетпĕр. Çак ĕçе вĕçлесен пирĕн ултă лавкка пĕрлехи сетьпе çыхăнать. Нумай пулмасть Вăрмарти аптекăна çак йĕрке çине куçартăмăр.

**– Сергей Николаевич, хатĕрлев ĕçĕ мĕнлерех пырать?**

– Ял çыннисемпе килĕштерсе ĕçлес, хатĕрлев-пулăшу отраслье аталантарас ыйтусене чи пĕлтерĕшлисен шутне кĕртетпĕр. Кăçал халăхран çĕр улми пухас енĕпе Чăвашпотребсоюзра 3-мĕш вырăн йышăнтăмăр, плана 263 процент тултартăмăр. 13 тонна кивĕ хут, 9 тонна çĕтĕк пухса тирпейлекен организацисене ăсатрăмăр. Выльăх-чĕрлĕх тытакансем райпо пулăшăвĕпе анлăн усă кураççĕ, тырă илсе килме заявкăсем параççĕ. Пĕлтĕр çак вăхăта 28 тонна сутнă пулсан – кăçал 65 тонна вырнаçтартăмăр. Кирлĕ пулсан райпо арманĕнче авăртса килех çитерсе паратпăр. Çынсем ыйтнипе 20 тонна вăрлăх çĕр улми, чăх-чĕп, удобрени нумай сутрăмăр. Паян, акă, райпо машинисем ултă яла цемент тиесе кайрĕç. Çулла çурт-хуралтă çĕклекен чылай, çавăнпа строиматериал чи кирлĕ тавар шутланать. Çакăн пек пĕр-пĕрне шанса, ăнланса ĕçлесен, пулăшса пырсан ял халăхĕшĕн те, кооператорсемшĕн те усăллă пуласси, пурнăç та малалла каясси иккĕлентермест.

■ **Алина ЛУКИЯНОВА.**

Автор сăн ӳкерчĕкĕ

*Сиенлĕ йăла*

# Ыттисен сывлăхĕ çинчен шухăшла...

***Федерацин 2013 çулхи нарăс уйăхĕн 23-мĕшĕнчи «Граждансен сывлăхне таврана сарăлнă табак тĕтĕмĕн тата ăна туртнă хыççăнхи сиен витĕмĕнчен сыхласси» 15-мĕш саккунĕ кăçалхи çĕртме уйăхĕн 1-мĕшĕнче туллин ĕçлеме пуçлать. Унăн хăш-пĕр статйи малтанах вăй илнĕччĕ-ха. Пирĕн хутлăхра, тĕслĕхрен, асăннă документ кун çути куричченех влаç органĕсенче, вĕренӳ, сывлăх сыхлавĕпе спорт учрежденийĕсенче тата ытти вырăнта пирус тĕтĕмĕнчен ирĕклĕ хутлăх туса хунă.***



Саккунпа килĕшӳллĕн пурнăçа кĕрекен çĕнĕлĕхсемпе паллаштарас тĕллевпе «Чăваш Ен» фондпа ЧР Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерстви республикăри массăллă информаци хатĕрĕсен журналисчĕсем валли çу уйăхĕн 26-мĕшĕнче пресс-конференци йĕркелерĕç. Мероприятие Роспотребнадзорăн Чăваш Республикинчи управленийĕн, ЧР Экономика министерствин представителĕсем те хутшăнчĕç.

«Чăваш Ен» фонд ертӳçи Михаил Федотов пĕлтернĕ тăрăх – çӳлерех асăннă саккун туллин ĕçлеме пуçлани общество апатланăвĕн заведенийĕсене – ресторансене, кафесемпе барсене, кофейнĕсемпе закусочнăйсене тата ыттисене – тӳрремĕнех пырса тивет. Малашне вĕсен сĕтелĕсем çинче кĕл тăкмăшсем пулмĕç, залсене туртма юрани-юраманни тăрăх уйăрмĕç, вĕсем пурте тĕтĕмсĕрĕмсĕр хутлăх шутланĕç, апатлантармăшра пирус мăкăрлантарманнине пĕлтерекен паллăсене заведение кĕмелли алăк çинех вырнаçтарĕç, табак продукцине рекламăлакан тата вĕсен бренчĕсемпе компанийĕсен маркетинг материалĕсене – барсенчи тата ытти вырăнти бренд аксессуарĕсене, сигарет лайтбоксĕсене – илсе хума тивĕ. Унсăр пуçне пĕтĕм персонала асăннă саккун вăя кĕни çинчен тĕплĕн ăнлантарса памалла, заведени ертӳçисен клиентсене туртма чарманшăн тата пӳлĕмсенче пирус мăкăрлантарнине сивлекен паллăсем пулманшăн пурлăх тĕлĕшĕнчен явап тытассине малтанах пĕлсе тămалла.

Урамра, çуллахи верандăсенче тата террасăсенче вырнаçтарнă сĕтелсен хушшинче туртма чармаççĕ паллах, мĕншĕн тесен саккун бизнес çыннисене усă вырăнта туртмашкăн ятарлă хӳтлĕх майлаштарма хистемест. Анчах та унашкалли халăх, уйрăмах çул çитмен çамрăксем, йышлăн çӳрекен çĕртен аякра вырнаçмалла.

Пассажирсене инçете илсе çӳрекен пуйăс-пăрахутра, хулари тата унăн çумĕнчи общество транспортĕнче, хăна çурчĕсенче, ача-пăча лапамĕсенче, хăйăр çинче хĕртĕнмелли вырăнсен чиккинче, тĕрлĕ ярмăрккара, халăх йышлă пухăнакан çĕрте туртмашкăн малашне ирĕк памĕç.

Çӳлерех асăннă саккунăн 16 статйи тăрăх табак сутассине хавхалантарма тата ăна рекламăлама чараççĕ. Пируссигарета сăнлакан произведенисене, çав шутра теле тата курав фильмĕсене, кинохроника программисене, экран çине кăларас умĕн çак ĕçе йĕркелессишĕн яваплисен малтан е кăларăм вăхăтĕнче табак сиенĕ çинчен социаллă рекламăна трансляцилеме тивет.

ЧР Экономика министерствин пай ертӳçи Имма Иванова асăннă саккунăн 19 статйи çинче ытларах чарăнса тăчĕ, пухăннисене табак продукцийĕпе суту-илӳ тăвас енĕпе палăртнă чикĕсемпе паллаштарчĕ. Йытă çимен апата кăçалхи çĕртме уйăхĕн 1-мĕшĕнчен киоскемпе палаткăсенче /çавăн пекех автоматсем урлă е дистанци мелĕпе/ сутма юрамасть, лавккасемпе павильонсенче кăна сĕнме пултараççĕ. Табак таварне сентре çине кăлармĕç, ăна туянас текене информацин прайс-хутне кăна сĕнĕç. Унта продукци ятне, хакне тата ăçта туса кăларнине пĕрешкел сас паллисемпе алфавит йĕркипе шурă хут çине хура тĕспе çапса кăларĕç. Клиента хăй суйланă продукцие кăна кăтартаççĕ. Кăмăлĕ пулсан туянать паллах, килĕшмесен – çаврăнса утать.

Сăмах май, 2015 çулхи ака уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пĕр пачка сигаретăн чи йӳнĕ хакĕ 55 тенкĕпе танлашма пултарать – Патшалăх Думин Экономика политики енĕпе ĕçлекен комитечĕ саккунăн çакнашкал проектне хатĕрлесе Правительствăна çитернĕ. Парламентарисем унăн хакне акциз улшăнăвне кура пăхса тухма тата ку кăтартăва инфляципе çыхăнтарма сĕнеççĕ. Экспертсен шухăшĕпе – 2018 çул тĕлне чи пĕчĕк хак 82 тенке çитме пултарать. Патшалăх палăртнă чи пĕчĕк хака чакарнăшăн граждансене административлă майпа 15 пин тенкĕ штраф тӳлеттереççĕ, должноçри çынсене – 150 пин /е 3 çуллăха дисквалификацилеççĕ/, юридици сăпатĕнче тăракансене – 300 пин. Чĕркем çине çирĕплетнĕ чи пĕчĕк суммăран йӳнĕрех хак лартсан юлашкисен 500 пин тенкĕ штраф кăларса хума тивĕ. Çавăн пекех производительсем туртакансемшĕн сигарет алă айĕнче пултăр тесе пачкăра вĕсен шутне ӳстерес тенине пӳлсе пĕр курупкăра 20 сигаретран ытла пулмалла маррине тата ăна пĕрерĕн сĕнме юраманнине пĕлтернĕ.

Чи пĕчĕк хака производитель сигарет маркине кура палăртĕ, ку хисеп суту-илӳре палăртнă чи пысăк суммăн 75 процентĕнчен пĕчĕк пулмалла мар.

Саккунра табак продукцине сутмалли вырăнсене пайăррăн асăннă. 2017 çулта çакнашкал тавар суту-илĕвне шута илмелли пĕрлехи тытăм тума шухăшлаççĕ.

Роспотребнадзорăн Чăваш Республикинчи управленийĕн пуçлăхĕ Надежда Луговская федерацин 15-мĕш саккунĕ вăя кĕнĕ май Раççей Федерацийĕн административлă право йĕркине пăснипе çыхăннă Кодекса тата реклама çинчен калакан саккуна 2013 çулхи юпа уйăхĕн 21-мĕшĕнче йышăннă 274-мĕш саккунпа кĕртнĕ улшăнусем çинче чарăнса тăчĕ. Тĕслĕхрен, табак таварне сутакан тытăмра йĕркене пăснăшăн уйрăм гражданина административлă майпа 2-3 пин тенкĕлĕх штраф тӳлеттереççĕ тĕк, должноçри çынсене – 5-10 пин, юридици сăпатĕнче тăракансене – 30-50 пин таран, çул çитмен çамрăксене ăна сутнăшăн пĕрремĕшĕсене – 3-5 пин, иккĕмĕшĕсене – 30-50 пин, виççĕмĕшĕсене - 100-150 пин тенкĕ таран.

Чару мерисене туртакансен ирĕкне хĕсес тĕллевпе йышăнман. Тата, мĕншĕн вĕсенне кăна? Сăмах кунта туртманнисене хӳтĕлесси, ачасен сывлăхне упрасси çинчен пырать вĕт. Тĕрĕссипе уйрăм çыннăн ирĕкĕ теприн ирĕкĕ пуçланнă çĕрте чикĕленет-çке. Саккун вĕсен çăварĕнчи пируса кăларса илмелле тенине пĕлтермест. Çав вăхăтрах ăçта мăкăрлантарма юранипе юраманнине пайăрлатса кăтартать: хăвăра упрассишĕн тăрăшмастăр пулсан та сирĕнпе юнашаррисен сывлăхĕ пирки шухăшлăр, табак тĕтĕм-сĕрĕмĕпе вĕсене ан тĕтĕрĕр – пирĕнтен кашниннех таса сывлăшпа усă курмалли ирĕк пуррине асра тытăр. Çул çитменнисене пируспа илĕртнипе вара ниепле те килĕшме çук. Мĕншĕн-ха вĕсене табак производителĕсен ĕмĕрлĕх чури туса хумалла? Малалла аталанмашкăн, çитĕнӳсем патне ăнтăлмашкăн, çĕр-шывăмăр ятнешывне çĕклемешкĕн пирĕн обществăна сывă та таса ăру кирлĕ.

ЧР Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерствин пай ертӳçи Евгения Гурьянова шухăшĕпе – патшалăхăмăр табак туртнин сиенне тата унпа çыхăннă чирчĕре пула çуллен пин-пин çынна çухатать. Унсăр пуçне халăхăн пысăк пайĕ ыттисем мăкăрлантарнине пула нушаланать. Пируспа туслисен ĕмĕрĕ 10-12 çул кĕскелни – кĕтменлĕх мар. Юлашки вăхăтра хĕрарăмсен хушшинче туртакансем йышланни сисчĕвлентерет.

Министерство сиенлĕ йăлана сирес енĕпе конкретлă ĕçсем туса ирттерет. Çак тĕллевпех асăннă тытăм çумĕнче координаци канашĕ йĕркеленĕ. Яваплă çынсем ку ыйтупа тăтăшах мониторинг ирттереççĕ. Пирусран писме тĕв тунисене сывлăх центрĕсенчи тухтăрсем консультаципе пулăшаççĕ, вĕсене сиплеççĕ. Сăмах май, табак чури пулса тăнисенчен кашни иккĕмĕшĕ сиенлĕ йăларан хăтăлас шухăшлă.

Пресс-конференцие хутшăннисен шухăшĕпе – çул çитмен çамрăксене никотин серепине çакланма памалла мар. Апла тăк мăкăрлантаракан çынсене вĕсенчен май пур таран сирмелле.

Анчах хальлĕхе тӳнтерле пулăм тупăнсах тăрать. Тĕслĕхрен, общество транспорчĕн чарăнăвнех илер. Ирсерен унта шкула васкакан, пепкине садике ăсатакан ашшĕ-амăшĕ йышлă пухăнать. Ĕçе каякан арсем вара автобус-троллейбуса ларичен туртса юлас тенĕ евĕр пăравус пек мăкăрлантараççĕ. Çакна пĕчĕкки те, çул çитменни те курать, ăша хывать. Республикăри хĕрарăмсен канашне асăннă ыйту уйрăмах канăçсăрлантарать. Çавна май унăн хастарĕсем ку енĕпе чару мерисем йышăнмашкăн пуçару тунă.

Пресс-конференцие вĕçленĕ май унта хутшăннă специалистсем журналистсен çӳлерех асăннă саккунпа çыхăннă ыйтăвĕсене хуравларĕç.

■ **Валентина СМИРНОВА**

# ВУЛАКАН ЫЙТАТЬ, СĔНЕТ, АСĂРХАТТАРАТЬ

## Сăмахпа кăна пулăшаççĕ

Тăван ялта час-часах пулатăп, уйрăмах çу кунĕсенче. Мĕншĕн тесен унта ĕçĕ те нумай, сывлăшĕ те хуларинчен тасарах.

Ял çынни паян начар мар пурăнать: пахча çимĕç лартса ӳстерет, выльăх усрать. Ерçӳллĕ самант тупăнсан вăрмана çырлана, кăмпана çӳрет. Çапах та калас сăмахăм кун пирки мар-ха...

Юлашки çулсенче ялсен инфратытăмĕ çĕнелсех пырать: çула асфальт сарнă, газ кĕртнĕ, халăха пахалăхлă шывпа тивĕçтерес енĕпе ĕçлеççĕ.

Комсомольски районĕнчи Çĕнĕ Сĕнтĕр ялĕнче те çавăн пекех темелле, шывсăр пуçне ĕнтĕ. Çӳлти касра пурăнакансем ăна халĕччен те кирлĕ чухлĕ илсе тăрайман. Уйрăмах çуллахи вăхăтра, мĕншĕн тесен пурте унпа пахча çимĕç шăвараççĕ. Çапах кăçалхи пек кансĕрри пулман: пăрăхран шыв пачах юхмасть. Пĕртен пĕр башня пур ялта, ăна та пулин йĕркеллĕ ĕçлеттерейменççĕ, юрăхсăра тухнăскере юсассишĕн тăрăшакан çук.

Çӳлти касра Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин ветеранĕ Анюк аппа пурăнать. Сакăр вунă çултан иртнĕскер хуçалăхĕнче пĕчченех кăштăртатать. Шыв çукки ăна уйрăмах пăшăрхантарать. Çак ыйтăва хаçат урлă хускатма кулянса та йĕрсе ыйтрĕ вăл мана.

Аслă Çĕнтерӳ кунĕ ячĕпе хисеплĕ ветеран патне саламлă открытка янă та хăйсен тивĕçне пурнăçланă тенĕ пулас пуçлăхсем. Мĕнле пурăнать пĕччен ватă? Ĕçмелĕх шывĕ пур-и унăн? Чирлесе ӳксен тухтăр килсе çӳрет-и? – çакă никама та канăçсăрлантармасть, ĕçлĕ çынсен кинемей патне çитсе курмашкăн ерçӳ çук.

Кану кунĕсенче яла кайсан ун валли шыв кӳрсе хăвартăмха, тем чухлĕ пурăнĕ ĕнтĕ унпа Анюк аппа? Кайран кам пулăшасса кĕтĕ-ши тата?

Пĕр шухăшласан – хисеплĕ ветеранăн ыттисене мĕншĕн тилмĕрсе çӳремелле? Ял халăхне шывпа тивĕçтерессишĕн яваплă çынсем пур вĕт. Çакăншăн вĕсем шалу илсе тăраççĕ. Шывпа усă курнăшăн халăхран укçа уйăхсерен пуçтараççĕ. Башньăна юсама та кашни килтен 500-шер тенкĕ пухнă терĕç. Шывĕ вара паян кунччен те çук.

Хаклă редакци, çак çырăва пичетлесе кăларăр. Кунашкал тĕслĕх Комсомольски районĕнче кăна мар, ытти тăрăхра та пур. Ватăсене, ветерансене хӳтĕлемелли çинчен нумай çыраççĕ. Анчах сăмахпа кăна пулăшаççĕ çав, ĕçпе – сайра-хутра кăна. Вырăнти яваплă çынсем хăйсен тивĕçне пурнăçламаншăн ветерансен нушаланма тивет.

Пушар тухас тăк мĕн курмалла? Инкеке сирмешкĕн шыв çук вĕт...

**Аслă ăру çыннисене ырă сунакан чăваш, Анюк аппан кӳрши.**

Шупашкар хули.

## Хак ӳсни пăшăрхантарать

Вулама юрататăп, чăвашла та, вырăсла та. Мускавра, Питĕрте тухса тăракан литература журналĕсемпе паллашсах тăратăп. Вĕсенче чăваш çыравçисен произведенийĕсене куçарса пичетлеменни кăмăла хуçать паллах. Мана ытларах «Наш современник» кăларăм килĕшет: тӳррĕн калама та именсе тăмасть вăл. Çапах хамăр кăларăмсем чуна çывăхрах. «Тăван Атăл» журналăн кашни номерне вуласа тухатăп. Çыравçăсен çĕнĕ кĕнекисене те тĕплĕн шĕкĕлчетĕп.

Ку таранччен хаçатсăр пурăнман, çуллен темиçешер экземпляр çырăнса илнĕ. Юлашки вăхăтра çырăнтару хакĕ ӳсни чылай шухăшлаттарать. Ялта пурăнакан пенсионерсенчен чылайăшĕ юратнă кăларăмсене малашне илеймессĕн туйăнать, мĕншĕн тесен вĕсен хакĕсем сисĕнмеллех ӳсрĕç. Пенси укçипе пурнăçа сыпăнтарса пымашкăн ахальа те çăмăл мар.

Районсенче вырăнти радиокăларăмсем эфира тухма пăрахнăранпа вăхăт самаях иртрĕ.

Ман шухăшпа – çӳлти пуçлăхсем халăха, ялта пурăнакансене уйрăмах, информаци кирлĕ мар теççĕ пулас. Çĕнĕ хыпарсем пирĕншĕн çăкăр пекех пĕлтерĕшлĕ. Çакна вĕсем ăнланмаççĕ-ши?

Нумай пĕлекен çын йышсăрри усăллăрах пулĕ çав...

**Рев РУБИН.**

Комсомольски районĕ.

*Вулаканпа калаçатпăр*

## Пенсие маларах тухас тесен

**Канаш районĕнче пурăнакан Иванов /автор ыйтнипе унăн тулли адресне палăртмастпăр/ сиенлĕ условисенче ĕçленипе ватлăхри ĕç пенсине маларах тухасси пирки ăнлантарса пама ыйтнă çырăва РФ Пенси фончĕн Канаш хулинчи тата районĕнчи управленине ярса патăмăр.**

Управлени пуçлăхĕн тивĕçне пурнăçлакан С.Кисина пĕлтернĕ тăрăх – федерацин 2001 çулхи раштав уйăхĕн 17-мĕшĕнчи «Раççей Федерацийĕнчи ĕç пенсийĕсем çинчен» 173-мĕш саккунĕн 27 статйин 1 пункчĕн 2 подпункчĕпе килĕшӳллĕн тивĕçлĕ канăва маларах тухмалли ирĕкпе йывăр условисенче 12 çул та 6 уйăхран кая мар ĕçленĕ арçынсем 55 çул тултарсан усă курма пултараççĕ. Енчен те вĕсем çав çĕрте палăртнă вăхăтăн çурринчен кая мар вăй хунă пулсан çӳлерех асăннă саккунăн 7 статйи тăрăх кашни 2 çул та 6 уйăхшăн 1-шер çул пĕчĕклетсе ĕç пенсине иртерех кăлараççĕ.

РФ Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерствин 2001 çулхи пуш уйăхĕн 31-мĕшĕнчи 258-мĕш хушăвĕпе ватлăхри ĕç пенсине маларах тухма ирĕк паракан ĕç тапхăрĕсене çирĕплетекен йĕркен 3 пункчĕпе килĕшӳллĕн правăна çак документсемпе çирĕплетмелле:

федерацин 1996 çулхи ака уйăхĕн 1-мĕшĕнчи «Обязательнăй пенси тытăмĕнчи харпăр хăй /персонификаци/ учечĕ çинчен» 27-мĕш саккунĕ тăрăх гражданин страхланă çын пулса регистрацилениччен – ĕçпе тивĕçтерекен е патшалăх /муниципалитет/ органĕсем панă документсемпе;

çӳлерех асăннă саккунпа килĕшӳллĕн страхлансан – харпăр хăй /персонификаци/ учечĕн кăтартăвĕсене тĕпе хурса.

1992 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕччен тапхăра илсе пенсие маларах каяс тенĕ чухне 1956 çулта палăртнă списоксемпе пĕрле 1991 çулта çирĕплетнисемпе те усă курма пултараççĕ, 1992 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕ хыççăн вара – 1991 çултисемпе кăна.

Иванов çырура сварщикра 30 çул каялла ĕçленине асăннă май ун чухне 1991 çулхи списоксем вăйра тăнă теме пулать. Вĕсемпе килĕшӳллĕн сварщиксен пенсие маларах тухмалли правăна тивĕçмешкĕн аргон тата атомводород мелĕпе ĕçлемелле пулнă, апла тăк çакна документпа çирĕплетмелле. Çав вăхăтрах автор ĕç кĕнекинче хăйĕн специальноçне электросварщик тесе палăртнине асăннă.

1956 çулта 1 тата 2 списоксене çирĕплетнĕ чухне «Пĕтĕмĕшле профессисем» ХХХП пая электросварщик профессине кĕртнĕ. Çавăнпа пĕрлех СССР Ĕç комитечĕн 1960 çулхи нарăс уйăхĕн 8-мĕшĕнчи 20-382 тата 1965 çулхи ака уйăхĕн 14-мĕшĕнчи 1240-ИГ çырăвĕсемпе килĕшӳллĕн контакт тата пăнчă мелĕпе шăратса çыпăçтаракан электросварщиксем 2 списокпа килĕшӳллĕн пенсие çăмăллăхпа тухмалли ирĕкпе усă курмаççĕ. Асăннă çăмăллăха алă вĕççĕн /ручная/ шăратса çыпăçтаракансем кăна тивĕçеççĕ. Çавна май пенсие маларах тухассипе çыхăннă ыйтăва татса панă чухне 1992 çулччenхи тапхăрта йывăр условисенче çапла майпа ĕçленине документпа çирĕплетмелле.

Çыру авторĕ Пенси фончĕн территори органне ĕç кĕнекине кăна çитерсе пани çинчен хыпарланă. Апла тăк пенсие маларах кăларма кирлĕ условисене çирĕплетмен. Вăл хăйĕн профессине пайăррăн кăтартманнипе ыйтăва тĕрĕс хуравлама май килмест.

Çакна тĕпе хурса специалистсем ăна тивĕçлĕ документсемпе Пенси фончĕн хăй пурăнакан вырăнти органне кайса ыйтăва уçăмлатма сĕнеççĕ.

*Ыйту-хурав*

## Саккунпа килĕшӳллĕн

**Çывăх тăван патĕнче прописккăра тăратăп. Вăл манран кивçен илнĕ укçа сумми пысăк, анчах ăна парса татма пултараймасть. Кун пек чухне парăм шучĕпе унăн çурчĕн пĕр пайне шыраса илме пултаратăп-и?**

РФ Гражданла процесс кодексĕн 446 статйипе килĕшӳллĕн парăмçăн харпăрлăхĕ шутланакан çак пуянлăха исполнитель документĕ тăрăх шыраса илме юрамасть:

- парăма кĕнĕ гражданинăн тата çемйин членĕсен пурăнма юрăхлă шутланакан пĕртен пĕр çуртне /унăн пайне/, ипотека япали шутланаканнисĕр тата саккун тăрăх ăна туртса илме пултараканнисĕр пуçне;
- çӳлерех асăннă объектсем вырнаçнă çĕр лаптăкне, ипотека япали шутланаканнисĕрри тата саккун тăрăх ăна туртса илме пултараканнисĕрри пуçне;
- килте куллен кирлĕ ăпăр-тапăра, уйрăм çын усă куракан тумтире, атă-пушмака тата ыттине, хаклă тата пысăк пуянлăх шутланакан япаласемсĕр пуçне;
- парăма кĕнĕ гражданина професси занятийĕ валли кирлĕ хатĕре, хакĕ федераци саккунĕпе палăртнă чи пĕчĕк шалуран 100 хут пысăкраххисĕр пуçне;
- предприниматель ĕçĕ-хĕлĕн тĕллевĕпе çыхăнман ăратлă, сĕт паракан тата ĕç выльăхне, пăлана, кролике, чăх-чĕпе, хурт-хăмăра, вĕсене çаран çине кăлариччен тăрантарма кирлĕ апата, усрамалли хуралтăсемпе сооруженисене;
- акмалли вăрлăха;
- парăмçа тата вăл тăрантарса усракансене пурăнма кирлĕ чи пĕчĕк виçерен кая мар суммăллăх апат-çимĕçе тата укçа-тенке;
- парăмçă çемйине куллен апат хатĕрлеме тата ăшăтса тăмалли тапхăрта çурт-йĕре хутма кирлĕ çунтармалли хатĕре;
- парăмçă-инвалидăн транспортне тата ăна куллен кирлĕ ытти хатĕре;
- парăмçă тивĕçнĕ призсене, патшалăх наградисене, хисеп тата асăнмалăх паллăсене.

Исполнитель документĕ тăрăх явап хумалли пурлăх переченьне федераци саккунĕ палăртать.

**Валентина СМИРНОВА хатĕрленĕ.**

# Приватизаци бюджета тĕревлетĕр

**/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.**

Министр çакăн сăлтавĕсене ăнлантарчĕ-ха, çапах М.Игнатьев кăмăлсăрланчĕ: «Кăларнисен вырăнне çĕннисене кĕртмелле. Пирĕн бюджет дефицичĕ чикĕ шайĕнче – мĕнпе саплаштарăпăр? Патшалăхăн пулăшу ĕçĕсене кӳме пăрахнă, коммерципе кăна ĕçлекен предприятисене тытса тăни вырăнсăр. Приватизаци вĕсемшĕн хăйсемшĕн те усăллă: кредитсемпе, инвестицисемпе усă курма пултараççĕ». Çавна май вăл «Чăвашагролизинг» ыйтăвне те тепĕр хут тишкерме сĕнчĕ.

Вице-премьер-ял хуçалăх министрĕ унăн бюджет кредичĕ пуррине кура чăрмав тухса тăнине палăртрĕ-ха, валеçнĕ 54 млн тенкĕлĕх кредитсен тавăрса памалли вăхăчĕ иртнĕ-мĕн, çав шутран каялла килмелли 30% кăна, ыттине тавăрса пама тивĕç предприятисем – панкрутсем. «Апла тăк ытти – çухалнă укçа, – пĕтĕмлетрĕ ЧР Пуçлăхĕ. – Çапах ыйтăва тепĕр хут тишкерме сĕнетĕп. Агролизинг ĕçне тепĕр хут чĕртмелле-и е çак тивĕçе урăххин пурнăçламалла-и – татса памалла. Анчах республика предприятийĕсене приватизацилемелле – инвесторсем шыраччăр. Бюджет дефицичĕ – 5 млрд тенкĕ патнелле. Ăçтан илĕпĕр? Çĕр лаптăкĕсене те сутлăха кăлармалла. Унсăрăн хушма укçа пулмĕ, дефицита саплаштараймăпăр».

Те çак темăпа çыхăннă кăмăлсăрлăх сăлтавларĕ – М.Игнатьев ЧР Чĕр чунсен тĕнчин объекчĕсене сыхлакан патшалăх службин ертӳçи Владимир Кузюков хăй ертсе пыракан тытăм ĕçĕ-хĕлĕ çинчен отчет тума сăмах илсен те ăна пӳлчĕ. Тĕрĕссипе, доклада кĕскерех тума сĕннине пăхмасăр Владимир Николаевич пĕлтерĕшлех мар самантсем çинче те чарăнса тăни кăмăлсăрлăх çуратрĕ пуль. Çийĕнчен – 2010-2013 çулсенче асăннă служба браконьерсене, ыттисене пĕтĕмпе те 730 пин ытла тенкĕлĕх кăна штрафлани, 591 пин тенкĕлĕх сиене çеç шыраса илни... Михаил Васильевич çаплах касса татрĕ: «591 пин тенкĕ – мĕн ку? Сирĕн хăвăрăн хăш-пĕр сотрудникăр та йĕркене пăсакансемпе çыхланса кайнă. Ĕçлĕр!»

Газ хакĕсене çирĕплетесси тавлашу çуратмарĕ. Конкурентлă политика тата тарифсен енĕпе ĕçлекен патшалăх службин ертӳçин тивĕçĕсене пурнăçлакан Алина Елисеева пĕлтернĕ тăрăх – утă уйăхĕн 1-мĕшĕнчен халăха сутакан газăн 1 пин кубла метрĕн хакĕ 4688,5 тенкĕпе танлашĕ. Ӳсĕм – 4,1%. Шĕветнĕ газ хакĕ те çавнашкал виçепех хăпарать теме юрать – 4,2% хушăнать.

Лару Министрсен Кабинечĕн маларах кăларнă хăшпĕр йышăнăвне улшăнусем кĕртнипе вĕçленчĕ.

■ **Николай КОНОВАЛОВ**

*Самана таппи*

# Агротехникум пурнăçпа тан пырать

***Етĕрнери 25-мĕш профтехлицей агротехникум статусне илнĕренпе икĕ çул кăна иртрĕ пулин те ӳсĕм куç умĕнчех. Кунта агропрома кирлĕ специальноçсене вĕрентеççĕ. Паян республикăри ял хуçалăх предприятийĕсенче механизаторсемпе автомеханиксем çитменни пысăк чăрмав кӳрет. Агротехникум инноваци меслечĕсемпе усă куракан, çаврăнăçуллă та пуçаруллă, мал ĕмĕтлĕ те пысăк квалификациллĕ специалистсем хатĕрлет. Сăмах – Олег Паликин директора:***

Реклама

– 7-9 çул каялла пирĕн училищĕне вĕренме кĕрекенсен хисепĕ самаях чакрĕ. Халĕ пачах урăхла: хăш-пĕр специальноçа алла илес текенсен хушшинче конкурс иртет. Професси пĕлĕвĕ паракан вĕренӳ тытăмне модернизацилени учреждени ĕçне пысăк витĕм кӳчĕ. ЧР вĕренӳ министрĕ Владимир Иванов пирĕн пата килсе лару-тăрăва тишкерчĕ, учреждение реформăлама тĕллев лартрĕ. «Вĕренме кĕрекенсен конкурсĕ пысăклансан техникум авторитечĕ хăпарĕ», – терĕ.

Патшалăх учреждение пулăшни коллектив яваплăхне те ӳстерчĕ. Çĕнĕлле ĕçлеме, паянхи саманапа тан пыракан кадрсем хатĕрлеме палăртрăмăр. Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче техникума вĕренме кĕнисен йышĕ ӳсрĕ. Техник-механик, тракторист-машинист тата повар-кондитер специальноçĕсене алла илме тĕллев лартнисен хушшинче конкурс иртрĕ. Паян ытларах рабочисем кирлĕ. Пирĕн патран вĕренсе тухнисем хăйсен специальноçĕпе ĕçлеме тăрăшаççĕ. Хăшĕ-пĕри аслă вĕренӳ заведенийĕнче пĕлĕвне ӳстерет.

Учреждени никĕсне çирĕплететпĕр, вĕренĕве çĕнĕлле йĕркелетпĕр. Техника паркĕ пуянланать. Вĕренӳ корпусне юсарăмăр. Вĕренекенсене апат кунне виçĕ хутчен тӳлевсĕр çитеретпĕр. Апатлантарма уйăрнă нухрат виçи кашни ача пуçне 4 хут ӳсрĕ. Хăтлă общежитире пурăнаççĕ. Ачасен çул тăкакĕн 30-80% компенсацилетпĕр. Стипенди 445-шер тенкĕ, çав шутра отличниксемпе спортсменсем, пысăк çитĕнӳ тăвакансем икĕ пиншер тенкĕ таран илеççĕ. Инноваци меслечĕпе анлăн усă куракан педагогсем пулăшнипе район, республика, Раççей шайĕнчи конкурс-олимпиадăна хутшăнаççĕ. Хăшĕ-пĕри çĕнтерет. Сăмахран, С.Клемспа А.Масанин республика конкурсĕнче малти вырăна тухнă. Е.Палейкинпа В.Анисимов республика Пуçлăхĕн стипендине илеççĕ.

Кăçал Шупашкарти коопераци институтĕнче пулас поварсем тупăшрĕç. Иккĕмĕш курсра вĕренекен К.Александрова, О.Николаева тата Е.Цепаева кĕмĕл медале тивĕçрĕç. Повар-кулинар ăсталăхне алла илме Л.Романова преподаватель, Т.Еремкина мастер вĕрентеççĕ. Вĕсем шăрттанпа пылак çимĕç, ытти апат тăрăшса хатĕрлерĕç.

Нарăс-ака уйăхĕсенче Раççейри çамрăк авторсен республикăри тапхăрĕнче «Манăн çĕр-шыв – манăн Раççей» конкурс иртрĕ. Унта 44 проект тăратнă. Конкурсантсем 10 номинацире кĕрешрĕç. К.Александрова «Манăн суйлав» номинацире пĕрремĕш вырăн çĕнсе илчĕ. Проект хатĕрлеме ăна Ю.Константинов преподаватель пулăшрĕ.

Конкурс-фестиваль ирттерни вĕренекенсен пĕлĕвне ӳстерме тата пултарулăха туптама май парать. Кружоксем ĕçлеççĕ. Илемлĕ пултарулăх коллективĕ те хăйĕн юрри-ташшипе савăнтарать. Республика фестивалĕнче халăх вокалĕн номинацийĕнче – пĕрремĕш, халăх ташшин, эстрада вокалĕн, режиссура номинацийĕсенче – иккĕмĕш, илемлĕ сăмах ăстисен ушкăнĕнче виççĕмĕш вырăнсене йышăнчĕ. Повар-кондитер пулма вĕренекен Н.Шорникова виçĕ çул конкурса хутшăнса мала тухрĕ. Спортра та çитĕнӳ тăвать. Кăçал республика Пуçлăхĕн стипендине илет.



● Н.Шорникова.

313 çамрăка пĕлӳ паратпăр. Пĕлтĕр хыснаран уйăракан укçаран вĕрентекен пĕрремĕш курса – 135, кăçал 165 çамрăка йышăннă. Бюджет пулăшнине ашшĕ-амăшĕ ырлать.

Техникум тĕллевĕ – Етĕрне, Муркаш, Хĕрлĕ Чутай, Элĕк районĕсем валли кирлĕ специалистсем вĕрентсе кăларасси. Çитес вĕренӳ çулĕнче автомеханиксем хатĕрлеме 9 тата 11 класс пĕтернĕ 60 çамрăка илĕпĕр. Повар-кондитера вĕренме 9 класс хыççăн – 30, ятарлă коррекци ушкăнне 15 çамрăка йышăнăпăр, вĕсене каменщика вĕрентĕпĕр. Кăçалтан çĕнĕ специальноçа /ял хуçалăх техникине механизацилесси/ алла илме пулăшăпăр. Унта 9 класс пĕтернĕ 30 яшпа хĕре вĕренме йышăнăпăр. Вĕсене экзамен тыттармасăрах илĕпĕр.

Техникумпа ашшĕ-амăшĕн хушшинчи çыхăну çирĕпленет. Вĕсем пире яланах пулăшма хатĕр. Етĕрнери сĕт заводне пысăк квалификациллĕ специалистсем кирлĕ. Вăл тата тирпейлекен ытти предприяти валли те кадрсем хатĕрлĕпĕр.

Техникум пуласлăхĕ пысăк. О.Паликин директор коллектива ӳсĕм çулĕпе ертсе пырать. Ĕçне кура – хисепĕ. Олег Валентинович 2011 çулта Раççейри профессин вăтам пĕлĕвĕ паракан вĕренӳ заведенийĕсен ертӳçисен хушшинче «Çулталăкри директор» ята тивĕçрĕ. Вăл – Раççей Федерацийĕн техника профессийĕн вĕрентĕвĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Етĕрне районĕн хисеплĕ гражданинĕ.



● В.Охотников мастер, А.Васильевпа А.Ефимов студентсем, О.Паликин директор.

■ **Юлия МАРЕЕВА.**

*ЧР Вĕренӳ тата çамрăксен политикин министерстви 06.06.2012ç. панă РО 046694№ лицензи*

*Çитĕнӳ*

# "Букет Чувашии" АУОн Сочири çĕнтерĕвĕ

***Шупашкарти "Букет Чувашии" АУО представителĕсем Сочи хулинчен чи пысăк пробăллă темиçе наградăпа таврăннă. Унта çу уйăхĕн 21-24-мĕшĕсенче професси форумĕ иртнĕ.***

Реклама

Пĕтĕм тĕнчери çак мероприятие, кăçалхипе 23-мĕш хут йĕркеленĕскере, Раççейĕн тĕрлĕ кĕтесĕнчи – Çĕпĕртен пуçласа Калининград таран – чи лайăх предприятисем, çавăн пекех Италири, Чехири, Германири, Китайри, Венгрири, Австрири, Словакири, Польшăри, Данири, Норвегири тата ытти çĕр-шывпа патшалăхри компанисем хутшăннă. Хура тинĕс хĕрринчи хĕвеллĕ хулари "Жемчужина" курав центрĕнче тĕрлĕ çĕртен кӳрсе килнĕ шĕвексен дегустацийĕ, куравсемпе конкурссем иртнĕ. Сочире çĕнсе илнĕ наградăсем – сумлă та пĕлтерĕшлĕ. "Букет Чувашии" АУО напитокĕсем конкурсра ылтăн медале тата икĕ Гран-прие тивĕçнĕ.

Шупашкарсен продукцийĕ хаклавçăсене мĕнпе илĕртнĕ-ха? Акă "Букет Чувашии "Домашний" кваса нумайăшĕ юрататъ. Хăй тĕллĕн йӳçнĕрен унăн тути хăйне евĕрлĕ, кăшт пылакрах. Вăл ĕçес килнине ирттернипе пĕрлех кăмăл-туйăма çĕклет, вăй-хал хушать, сывлăха та ырă витĕм кӳрет. Ахальтен мар ку кваса конкурсра виççĕмĕш хут ĕнтĕ ылтăн медальпе чысланă, кăçал вара Гран-припе наградăланă.

"Травы-гранат" лимонад-напиток та ылтăн медале тивĕçнĕ. Ку напитока таса та пахалăхлă улма-çырлапа, тĕрлĕ курăкпа хутăштарса хатĕрлеççĕ. Тутлă та техĕмлĕскер кирек мĕнле ӳсĕмри çынна та килĕшмелле! Вăл уяв сĕтелне те илемлетет, ĕçес килнине ирттерет, çавăнпа ăна шăрăх çанталăкра черет тăрсах туянаççĕ. Ытти чухне те ку лимонад лавккасенче вăрах вăхăт тытăнса тăмасть.

"Букет Чувашии" АУО кăларакан продукци пĕтĕмпе 180 ытла наградăна тивĕçнĕ, çав шутран ытларахăшĕ – ылтăн медаль. Компани çитĕнӳ хыççăн çитĕнӳ туни ăнсăртран мар: вăл ăнăçлăн аталанса пырать, хальхи йышши оборудованипе усă курать, унта пысăк квалификациллĕ специалистсем ĕçлеççĕ, напитоксене паха чĕр тавартан тата классика технологийĕсене тĕпе хурса хатĕрлеççĕ. Ахальтен мар фирмăн ыттисенчен уйрăлса тăракан продукцийĕ пурте пĕлекен бренд пулса тăчĕ.

■ **И.КЛЕМЕНТЬЕВА**





# Новый формат судебных решений в ГАРАНТе

**В мае компания "Гарант" выпустила "Энциклопедию судебной практики" – сборник аналитических материалов, обобщающих и систематизирующих судебную практику.**

Специалистам в решении профессиональных задач нередко приходится обращаться к позиции судов. Изучив аналогичное дело, рассмотренное в суде, можно узнать, как там применялась та или иная норма права, и выбрать оптимальный алгоритм действий для защиты или восстановления нарушенных прав.

И если раньше чтобы вычленить нужную информацию из судебного решения, требовалось много сил и времени, то использование новой энциклопедии ГАРАНТа значительно упрощает работу с судебной практикой.

**Если вы юрист,** с помощью нового блока вы сможете быстро ухватить суть дела, понять мнения судов, получить возможность перейти к текстам нужных судебных актов и сэкономить время и силы. Подготовка к судебному разбирательству, заключение договора, оценка возможных рисков - новый блок будет вам полезен в любой ситуации.

Непосредственно на хрупкие плечи **кадровых специалистов** ложится тяжелая ноша принятия важных решений: прием на работу, заключение и изменение трудового договора, заполнение трудовой книжки, увольнение и так далее. Благодаря "Энциклопедии судебной практики" вы получите возможность быстро узнавать мнения судов по интересующему вопросу и опираться на них в своей работе.

Новая "Энциклопедия" поможет **бухгалтерам** легко и быстро узнавать актуальную позицию судей, например по вопросам толкования норм Налогового кодекса. Кроме того, такие материалы будут полезны **финансовым специалистам,** которые вынуждены постоянно анализировать судебную практику.

Если вы **руководитель или собственник бизнеса,** постатейный анализ судебной практики позволит вам грамотно и взвешенно принимать стратегически важные для компании решения. В вашем распоряжении окажутся материалы к Закону "Об акционерных обществах" и Закону "Об обществах с ограниченной ответственностью", где представлены правовые позиции судов по острым вопросам корпоративных отношений.

Позиции суда, представленные в сборнике, охватывают следующие **тематики:** налоговое право, корпоративное право, договоры, трудовое право, законодательство о защите прав потребителей. "Энциклопедия" развивается и совершенствуется: в ближайшем будущем расширится охват норм и количество проанализированных судебных решений.

С помощью "Энциклопедии судебной практики" вы сможете уверенно решать профессиональные вопросы и быстро справляться с поставленными задачами.

Реклама

ИНФОРМАЦИОННО-ПРАВОВОЕ ОБЕСПЕЧЕНИЕ

**Подробнее о новинке вы можете узнать в ООО "Гарант-Чебоксары", тел. (8352) 43-95-25, www.garant121.ru**


*Хӳтлĕх*

# Тăлăхсене аслă юлташ кирлех

***Чăваш Республикинчи ача çурчĕсемпе интернат шкулсенчен çуллен 50-100 тăлăх е ашшĕ-амăшĕн хӳтлĕхĕсĕр юлнă ача вĕренсе тухать. Вĕсенчен чылайăшĕ малашнехи çулне професси пĕлĕвĕ паракан организаципе е аслă шкулпа çыхăнтарать. 2012-2013 вĕренӳ çулĕнче, тĕслĕхрен, 12 интернатран 58 çавнашкал çамрăк тухнă. Вĕсенчен çурри ытларахăшĕ рабочи профессийĕсемпе хатĕрлекен программăсемпе пĕлӳ илме тытăннă, 43 процентĕ – вăтам професси пĕлĕвне параканнисемпе. Аслă вĕренӳ аслă заведенине каякансем яланхиллех – пĕр е икĕ çын кăна. Пĕлӳ илнĕ тапхăрта патшалăх тăлăхсене пĕтĕм енчен тивĕçтерсе тăрать – пурăнмалли кĕтеспе /общежитире/, пысăклатнă стипендипе, вĕренӳ литературипе т. ыт.те.***

Республикăра ача çурчĕсемпе интернат шкулсенче çитĕнекен çул çитмен çамрăксене хăйсене тĕллĕн пурăнма, юридици, экономика, йăла ыйтăвĕсене татса памашкăн пулăшас тĕллевпе тĕрлĕ специалист ĕçлет. Апла пулин те тăлăхсен тĕлĕшпе çивĕч, саккун ыйтнă пек пулса пыман самантсем тупăнсах тăраççĕ.

Çу уйăхĕн 15-мĕшĕнче Шупашкарта тăлăхсемпе ашшĕ-амăшĕн тимлĕхĕсĕр юлнă ачасемпе çамрăксен прависене хӳтĕлес ыйтусемпе республикăри семинар-канашлу иртрĕ. Унта Чăваш Ен Вĕренӳпе çамрăксен политикин министрĕн пĕрремĕш çумĕ Светлана Петрова, Чăваш Республикинчи Ача прависен уполномоченнăйĕ Вячеслав Рафинов, ЧР Прокуратурин, Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службин представителĕсем, опекăпа попечительство органĕсен специалисчĕсем, тăлăхсен организацийĕсен ертӳçисем, професси пĕлĕвĕ паракан учрежденисенче воспитани ĕçне йĕркелесе пыракансем хутшăнчĕç.

Юлашки çулсенче Раççейре тăлăхсемпе ашшĕ-амăшĕн тимлĕхĕсĕр юлнă ачасене хӳтлĕхе илесси актуаллă. Çавна май професси вăтам пĕлĕвне паракан çуртсенче те вĕренекенсен списокĕнче попечительсĕр тăлăхсене сахаллатассишĕн тăрăшаççĕ. Кун пирки Светлана Петрова уççăнах çапла каларĕ:

– Патшалăх саккасĕ ку – нимĕн пытармалли те çук. Пирĕн республикăра асăннă категорие кĕрекен заведенисенче паянхи кун тĕлне – хӳтлĕхсĕр 43 çамрăк. Шанатăп: килес вĕренӳ çулĕн пуçламăшĕ тĕлне вĕсен пурин те официаллă попечителĕсем тупăнĕç. Çак улшăнăва хăвăртлатас тĕллевпе хамран пуçлатăп – вĕренӳ ведомствин ĕçченĕ пулнă май. Шупашкарти электромеханика колледжĕн /семинар шăпах унăн конференц-залĕнче иртрĕ/ пĕр студентне «хамăн çунат айне илĕп». Ун валли тимлĕх çитерме вăхăт тупайăп-и? Шикленме кирлĕ мар, çемьене ача илнинчен урăхларах форма ку. Попечителĕн ачан вĕренĕвĕпе, канăвĕпе, обществăра хăйне мĕнле тытнипе кăсăкланса тăмалла. Хушăран эпир экскурсие тухăпăр, ăна киле хăнана илсе кайăп, вăхăта усăллă та кăмăллă ирттермелли майсем темĕн чухлех. Тăлăхсем – педагогика енчен çителĕксĕр тимлĕхлĕ, çавна май вĕсемшĕн аслă юлташ çумра пурри пĕлтерĕшлĕ.



Семинар-канашлура электромеханика колледжĕн директорĕ Андрей Фомин хăйсен патĕнче вĕренекен тăлăх тата ашшĕ-амăшĕн хӳтлĕхĕсĕр çамрăксем мĕнлерех лару-тăрури çинчен каласа кăтартрĕ. Чăн та, слайдсене пăхсан ку учреждени «йывăр» студентсене обществăн çирĕпленнĕ йĕркипе пурăнма хăнăхтарасшăн май пур таран тăрăшни сисĕнет. Апла пулин те йăлтах лăпкă та яка теейĕмĕн. Докладçăна ыйтусем парас самант çитрĕ те – кăçал колледжран пĕр вĕренекене кăларса ярас хăрушлăх пурри палăрчĕ. Ашшĕ-амăшĕнчен уйрăм çитĕнекенскер – Куславккаран, опекунĕ те унтах пурăнать. Тăван ашшĕ те. Шел, хăй вăхăтĕнче ачине пăхас ирĕке унран туртса илнĕ. Вĕренӳ учрежденийĕн ертӳçи ĕнентернĕ тăрăх, халĕ вăл «юсаннă», ывăлне витĕм кӳме пултарать-мĕн. Колледжра вара никама та итлесшĕн мар имĕш. Çак тĕслĕхе сӳтсе явнă май семинар йĕркелӳçисем ăна тарăннăн тĕпчемеллине пĕтĕмлетрĕç. «Нотаци» вулани ырри патне çитермĕ. Çул çитмен ачан психикине, сывлăхне тĕрĕслеме тарăн диагностика ирттермелле», – терĕ С.Петрова.

Семинарта шкулпа сыв пуллашакан тăлăхсене вĕренӳ çулĕ пуçланиччен хи вăхăтчен çемьесене вырнаçтарас, училище-техникумра вĕренекенсене çуллахи каникулта лагерьсене ярас, тăлăхсене кӳрекен юридици пулăшăвне вăйлатас ыйтусене пăхса тухрĕç.

■ **Анна КУПРИЯНОВА**

**Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕнче граждансене 2014 çулхи çĕртме уйăхĕнче харпăр хăй ыйтăвĕсемпе йышăнмалли**

**КУНСЕМ**

**/Цифрăсемпе йышăну кунĕсене палăртнă/**

| | | |
|---|---|---|
| **17** | **Ю.А.ПОПОВ** | Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Председателĕ |
| **03** | **А.П.КНЯЗЕВ** | Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Председателĕн çумĕ – Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Бюджет, финанс тата налуксем енĕпе ĕçлекен комитечĕн председателĕ |
| **04** | **О.В.МЕШКОВ** | Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Председателĕн çумĕ – Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Экономика политики, агропромышленноç комплексĕ тата экологи енĕпе ĕçлекен комитечĕн председателĕ |
| **19** | **П.С.КРАСНОВ** | Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Социаллă политика тата наци ыйтăвĕсемпе ĕçлекен комитечĕн председателĕ |
| **26** | **Н.В.МАЛОВ** | Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Патшалăх строительстви, вырăнти хăй тытăмлăх, Регламент тата депутат этики енĕпе ĕçлекен комитечĕн председателĕ |

Граждансене Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн йышăну пӳлĕмĕнче çак адреспа йышăнаççĕ: Шупашкар хули, Президент бульварĕ, 10 çурт, 3-мĕш пӳлĕм.

Йышăну вăхăчĕ: 10 сехетрен пуçласа 17 сехетчен.

Ыйтса пĕлмелли телефон: 64-21-67.

# Сирĕн ялта миçе курак?

Республикăри вун тăхăр районпа икĕ хулари 72 шкулăн 500 ытла ачи «Кураксем вĕçсе килчĕç» операцие хутшăннă. Çак кайăксем чĕп кăларнă 922 турат-тĕретлĕхри 22372 мăшăра 371 ял-хулапа /Чăваш Енри çын пурăнакан хутлăхăн 21,6 проценчĕ/ вĕсен таврашĕнче шута илнĕ. Сăнава Етĕрне /71 ял/, Муркаш /58/, Елчĕк /34/, Красноармейски /32/, Комсомольски /30/ районĕсенчи вĕренекенсем хастар хутшăннă. Елчĕксем, Етĕрнесем, Комсомольскисем, Çĕмĕрлесем çын пурăнакан вырăнăн 64-50 процентĕнче шутлав йĕркелеме пултарнă. Çак ĕçре шкул директорĕсемпе биологи вĕрентекенĕсен тӳпи пысăк.

Етĕрнесем чи нумай – 4389, Муркашсем – 2769, Çĕрпӳсем – 2520, Елчĕксем – 2286, Комсомольскисем 2257 йăвана асăрханă. Хурашкасен чи пысăк йышĕ – Çĕрпӳ районĕнчи Анатри Кипекçе /537 йăва/, Янтуш /482/, Елчĕк районĕнчи Кĕçĕн Таяпа /401/, Вăрнар районĕнчи Уйкас Кипек /368/ ялĕсенче тата Етĕрне хулинче /329/. Тĕпчеве Шупашкарти шкул тулашĕнчи ĕçсен «Эткер» центрĕ пуçарнипе ирттернĕ. Мала тухнă шкулсемпе ачасене Диплом парса хавхалантарнă.

■ **Ю.МИХАЙЛОВ**

